Пĕрлехи информаци кунĕнчен

# Ыйтусене пĕрле татса парас пулать

***Декабрĕн 14-мĕшĕнче Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров хăйĕн Чăваш Республикин Патшалăх Канашне яракан çулленхи Çырăвĕпе паллаштарчĕ. «Чăваш Ен: пуласлăхри тата пуласлăх валли» тесе ят панă ăна кăçал. Çырура хускатнă ыйтусем те, унăн пĕлтерĕшĕ те паянхи куншăн пысăк пĕлтерĕшлĕ. Иртнине хакланипе пĕрлех президент республикăна çирĕп аталану çулĕ çине кăлармалли çул-йĕре палăртрĕ. Çавна май декабрĕн 16-мĕшĕнче республикăра иртнĕ пĕрлехи информаци кунĕн теми те асăннă Çырупа, коллективсенче унпа тĕплĕнрех паллаштарассипе çыхăнни ăнсăртран мар. Виçĕ ушкăн пулчĕ пирĕн районта. Вĕсене Чăваш Республикин пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрĕн çумĕ Олег Степанович Шайнога, «Чăваш Республикинчи вĕрентӳ институчĕ» патшалăх вĕрентӳ институчĕн проректорĕ Светлана Васильевна Димитриева, Раççей Федерацийĕн Федераллă Пухăвĕн Федераци Канашĕн членĕн Л.Л. Лебедевăн пулăшаканĕ Михаил Иванович Федотов ертсе пычĕç.***

Чăваш Республикин пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрĕн çумĕ О.С. Шайнога район пуçлăхĕпе чи малтан Калайкассинчи вăтам шкула çитсе, кунти ĕç коллективĕпе тĕл пулчĕ. Олег Степанович Пĕрлехи информаци кунĕн теми çинче – Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров Чăваш Республикин Патшалăх Канашне, Чăваш Ен халăхĕ патне 2010 çул валли янă Çыру çинче тĕплĕн чарăнчĕ. Вăл пĕтĕм тĕнчери кризис вăхăтĕнче республикăра туса ирттернĕ ĕçсем пирки каларĕ. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ те, ĕçпе тивĕçтерекен центрсем те, ĕç паракансем те паянхи кун ыйтакан профессине алла илме пулăшнă çĕре ямаллине тимлĕх уйăрни, Чăваш Енре юлашки çулсенче 19 спорт комплексĕ туса лартни, 2 пин ытла çемье хваттер туянма илнĕ кредитсене ача амăшĕн капиталĕпе саплаштарни, ачасем çураласси 7 процент ӳсни çинчен пĕлтерчĕ. Çавăн пекех паян пирĕн шывпа, электричествăпа, ăшăпа перекетлĕ усă курмаллине палăртрĕ. Олег Степанович Çырура асăннă Чăваш Республикине вăйлă республика тума май паракан кашни приоритет çинче тĕплĕн чарăнчĕ.

– Ахальтен пуçламарăмăр паян информаци кунне шкулта. Мĕншĕн тесен ача пурнăçра кирлĕ пĕлĕве кунта илет. Çавăнтан пурнăçра хăйне кирлине суйласа илсе практикăра усă курма пĕлесси те сирĕн ĕçĕртен нумай килет, – терĕ вăл.

Республикăри шкулсенче вĕренсе тухакансен пĕлӳ шайĕ çӳллĕ пулнине палăртрĕ, çакăншăн учительсене тав турĕ. Çырури шухăшсем çинчен уйăрммăн чарăннă май, биотехнологи çинчен сăмах хускатсан, министр çумĕ Муркаш районĕ экологи тĕлĕшĕнчи лару-тăрăва лайăхлатассинче пуçаруллă пулнине, кунта республикăра чи пĕрремĕш паянхи кун ыйтакан çӳп-çап тăкмалли полигона тунине палăртрĕ.

Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов Президент Çырăвне сӳтсе явнă май çакна палăртрĕ: Çырура палăртнă самантсене пирĕн, çынсен, пурнăçа кĕртмелле. Çавăнпа та паянхи кун ыйтакан специалистсене хатĕрлесси сирĕнтен, учительсенчен, нумай килет.

Юрий Александрович çавăн пекех тирпейлĕх, перекетлĕх ыйтăвĕ çинче те чарăнчĕ. Чикĕ леш енчи çĕршывра пурăнакансем ваннăра çăвăннă шывпа кайран урăх тĕллевсемпе усă курнине илсе кăтартрĕ.

– Унта укçана шутлама пĕлеççĕ, эпир вара кашни пуса шутлама, перекетлеме вĕренсе çитеймен-ха, – терĕ, – çапла тума пирĕн вĕренмеллех. Кăçал шăрăх çанталăка пула ялсенчи çăлсенче шыв чакса кайрĕ. Пурнăç пире хăех перекетлеме вĕрентет.

Çавăн пекех Юрий Александрович пĕтĕм тĕнчери финанс кризисĕ пире пĕтĕм опыта, вăя пухса йывăрлăхсене çĕнтерме вĕрентнине палăртрĕ. Район пуçлăхĕ кашни коллективра тĕплĕн пăхса тухса, кашни çыннăн хăйĕн умне конкретлă тĕллевсем лартмаллине палăртрĕ, мĕншĕн тесен республика вăйлă пуласси пирĕнтен кашнинчен килет.

Электронлă документсен çаврăнăшĕ пирки сăмах хускатнă май Юрий Александрович ку ĕç кăçал район администрацийĕнче йĕркеленсе каймалли çинчен каларĕ. Çакă ялти çыншăн та питĕ меллĕ. Вăл вăхăта сая ямасăрах кирлĕ инфомацие илме май парать.

Тĕл пулура учительсен ыйтусем те çуралчĕç. Çырура аслă шкулта паракан пĕлӳ шайне палăрмаллах ӳстермеллине палăртнине шута илсе, квалификацине хăш вĕренӳ заведенийĕсенче ӳстерсен лăйăх пулмалли кăсăклантарать вĕсене. Çавăн пекех компьютерпах кирлĕ справкăсем илме май пулать пулсан малалла, çакă тӳлевсĕр пулать-и, тесе ыйтрĕç. Ыйтусем çине вырăнтах хурав илчĕç.

Унтан информаци ушкăнĕ Муркашри чăх-чĕп фабрикинче пулчĕ. Асăннă предприяти ертӳçи Н.Г. Ванеркин хăнасене коллектив ĕçĕхĕлĕпе паллаштарчĕ. Вĕсем цехсенче пулса производство епле пынипе паллашрĕç. Çакна палăртмалла. Кунта кашни Çĕнĕ çул умĕн çĕнĕ оборудовани лартаççĕ. Информаци ушкăнĕ пынă вăхăтра шăпах Испанире туса кăларнă çĕнĕ оборудование вырнаçтаратчĕç.

– Тепĕр 4 кунтан вăл хута каймалла, – ăнлантарчĕ Николай Григорьевич.

Олег Степанович коллектив Н.Г. Ванеркин ертсе пыма пуçланăранпа 9 çул хушшинче Чăваш Республикин Президенчĕ аллинчен илнĕ 8 диплома тишкерчĕ, асăннă коллектив республикăра чăннипех те пултаруллă пулнине палăртрĕ.

Хыççăн информаци ушкăнĕ фабрикăн актовăй залĕнче специалистсемпе тĕл пулчĕ. Олег Степановичпа Юрий Александрович Президент Çырăвĕ çинче тĕплĕн чарăнчĕç. Залра ларакансен ыйтăвĕсем çине хуравларĕç. Ыйтусем республикăра энерги кăларакан çăл куççем туса кăларассипе тата предприяти малашлăхĕпе çыхăннăскерсем пулчĕç. Информаци ушкăнĕ вĕсем çине тулли хуравсем пачĕ.





* * *

М.И. Федотов ертсе пыракан ушкăн çав кун Муркаш райповĕнче пулчĕ, кунти коллективпа тĕл пулу ирттерчĕ. Ушкăнра çавăн пекех район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ Эльвира Иосифовна Симакова та пулчĕ.

Информаци кунне уçнă май чи малтанах Эльвира Иосифовна районăн 2009 çулхи январь – ноябрь уйăхĕсенчи экономикăпа социаллă аталанăвĕн кăтартăвĕсем çинче чарăнса тăчĕ. Промышленноç енĕпе лару-тăру юлашки вăхăтра йывăртарах. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан, промышленность продукцине туса кăларасси 54,7 процентпа кăна танлашнă. Аш-какай 96,8 процент, тĕш тырă культурисене 115,1 процент туса илнĕ. Выльăхсен йышĕ чакса пырать. Строительство енĕпе те ыйтусем çук мар.

Михаил Иванович хăйĕн сăмахĕнче республика президенчĕн Çырăвне тĕплĕн тишкерсе хак пачĕ. Чăнах, кризиса пула производство кăтартăвĕсем чакнине палăртмалла. Апла пулин те патшалăх пенсисемпе тивĕçтерес, бюджетниксене ĕç укçи йĕркеллĕ тӳлесе тăрас енĕпе хăйĕн тивĕçне кирлĕ пек пурнăçлать. Малашне вара экологи тĕлĕшĕнчен таса продукци туса кăларасси, çĕнĕ технологи мелĕсемпе усă курасси, вĕрентӳ пахалăхне лайăхлатасси т. ыт. ыйтусем çине ытларах тимлĕх уйăрмалла пулать. Умри пĕлтерĕшлĕ задачăсене пĕрле кăна ăнăçлă татса пама май пур.

М.И. Федотов çавăн пекех Муркаш райповĕн ĕçченĕсен ячĕпе тав сăмахĕ те калама манмарĕ. «Пултаратăр, экономика кризисĕн тапхăрне чăтма кăна мар, конкуренци вăхăтĕнче малалла та аталану çулĕпе кайма пултаратăр»,– терĕ вăл. Хăш-пĕр районсенче вара райпо магазинĕсем хупăнма тивни те вărттăнлăх мар. Муркаш районĕнче кун пекки çук-ха.

Çырупа çыхăннă ыйтусемпе пĕрлех райпо ĕçченĕсене хумхантаракан ыйтусене те итлеме тиврĕ Михаил Ивановичăн. Калăпăр, «Ĕç ветеранĕ» ят илесси чылайăшне шухăшлаттарать. Акă сутуилӳре 30-шар çул ĕçлесе пенсие тухакансем сахал мар. Анчах та вĕсенчен ытларахăшĕ «Ĕç ветеранĕ» ята тивĕçсе çăмăллăхсемпе усă кураймасть. Хăйсене хумхантаракан ыйтусемпе пухăннисем тулли хуравсем илме пултарчĕç.

**Л. ПАВЛОВА,**
**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: чăхчĕп фабрикинче продукци илессине чакармаççĕ.**

Культура хыпарĕсем

# «Тавах пире манманшăн»

Туслăн пĕрле пухăнсан,
Эс ват çынна ал парсан, пулăшсан,
Эп ват çыншăн тăрăшсан,
Ват çын пулĕ кăмăллă.
Çутă юрă пуçласан, юрласан,
Ĕмĕр пĕрле кăмăлпа
Сывлăхпа та шанчăкпа пурăнсан,
Ват çын тăрĕ савăнса.



Çак сăвăри илемлĕ сăмахсем пек пĕр-пĕрне ялан пулăшсан питĕ телейлĕ пулĕччĕç Каршлăхри вăрçăпа ĕç ветеранĕсен интернат çуртĕнче пурăнакан ватăсем.

Вăй питти те сывă çӳренĕ чухне вată çынсем çутă тĕнче хăйсемшĕн хура чатăрпа хупланма пултарасса шутламан та. Халĕ вара вĕсемшĕн çак интернат çурчĕ, кунта вăй хуракансем – хӳтлĕх те, чи çывăх çынсем те.

Ку хăтлă та хитре çурт 24 ватăна хăйĕн хӳттине илнĕ. Аслă ăру çыннисен пурнăçне ырă витĕм кӳрессишĕн куллен тăрăшаççĕ кунти специалистсем, ĕçĕн çĕнĕ мелĕсемпе усă кураççĕ. Ватăсем хăйсене килти пек туяççĕ. Вăхăтра çиеççĕ, мунча кĕреççĕ, таса тумтир яланах алă айĕнче.

Нумаях пулмасть кунта Турай ял тăрăхĕнчи агитбригада коллективĕ пулчĕ, ватăсене ташă-юрăпа савăнтарчĕ. Баянпа выляканни, хитре кĕвĕсем шăрантараканни – Н.М. Кондукторова. Репертуарĕ те вĕсен пуян. Концерт хыççăн вара ватăсем пĕрин хыççăн тепри тав сăмахĕ каларĕç.

**В. КРЮЧКОВА,**
**Каршлăхри вăрçăпа ĕç ветеранĕсен интернат çурчĕн культоргĕ;**
**Г. АНДРЕЕВА,**
**Анаткассинчи библиотека ертӳçи.**
**Сăн ӳкерчĕкре: ватăсем патĕнче – ташă-юрă ăстисем.**

Йăла-йĕрке

# Типĕ тытни усă парать-и?

Тӳрех каламалла, çакă вăл Турăшăн та, çыншăн хăйĕншĕн те усăллă тата килĕшӳллĕ. Типĕ тытнă кунсенче пирĕн организм та, ăс-тăн та, чун-чĕре те тасалаççĕ, çемçелеççĕ, илемленеççĕ. «Эсĕ типĕ тытатăн пулсан, çынсем умĕнче мар, курăнман Турă умĕнче пулма пуçна, пит-куçна çуса тасататăн. Вара сана вăрттăнлăха куракан Турă мĕн кирлине туса парĕ»,– тесе çырнă Евангелире.

Кунпа пĕрлех тунă çылăхсемшĕн ӳкĕнсе Турă умĕнче каçару ыйтмасан типĕ тытнинчен усси çук. Пурнăçри йăнăшсемпе çитменлĕхсене Турă умĕнче уçса парса ӳкĕнсен çеç Турă ырлăхне кĕтме, çăлăнăçпа савăнăç пурнăçа çăмăллатасса шанма пулать.

Православин нумай вăхăт тата пĕр кун типĕ тытас йĕрке пур. Аслă типĕ тытас кунсем Çăварнирен пуçланса Мăнкунччен, урăхла каласан, 7 эрнене пыраççĕ. Питрав типпи Таса Троица хыççăн пĕр эрнерен пуçланать те утă уйăхĕн 12-мĕшне çити пырать. Ку типĕ Мăнкун пĕр пек кунсенче килмен пирки 2 эрнерен пуçласа 6 эрне таран пулма пултарать. Уçпени типпи çурла уйăхĕн 14-мĕшĕнчен пуçласа 28-мĕшне çитиччен тăсăлать. Раштав умĕнхи типĕ 40 куна пырать, чӳк уйăхĕн 28-мĕшĕнче вĕçленет. Уяв эрнисĕр пуçне кашни эрнере типĕ тытмалли 2 кун – юн кунпа эрне кун – пур.

Типĕ тытмалли кунсенчен ытларахăшĕ аслă уявсемпе çыхăнса тăрать. Типĕ тытнă вăхăтра апат-çимĕçе суйласа çини сывлăхшăн нимĕн чухлĕ те сиенлĕ мар. Пачах урăхла, çакă вăл организмшăн усăллă тесе шутлаççĕ. Çапла вара Православи йăли-йĕркисене сивлеме нимĕнле сăлтав та çук.

**П. ИВАНОВСКИЙ.**

Кĕртекасси ялĕ.

Шкул ачисен пултарулăхĕ

## Аннене

Эх, епле хитре-çке эсĕ, анне!
Сан сывлăм евĕр тап-таса куллу
Ялан тăрать шевле сапса,
Пирĕн пурнăç çулне çутатса.

Хĕвел шевли пек ыр чĕрӳ
Юратупа ялан тулли.
Пире ăс-тăн, вăй-хал парса
Ĕмĕрĕпех тăрать çунса.

**Надя АЛЕКСЕЕВА.**
Сосновка шкулĕ.

## Тусăмсене

Ăсталарăм аттепе
Кайăксем валли вĕлле.
Вĕлли пулчĕ арча пек
Ăмсанмалăх туссене.

Сив ан тивтĕрччĕ сире,
Тутă пулăр яланах,
Килсех тăрăр ман пата,
Çут çанталăк тусĕсем!

**Вова ЕРМОЛАЕВ,**
**Мăн Хураçка шкулĕнче 3-мĕш класра вĕренекен.**